# Урок теми:

# Синтаксис. Пунктуации. Синтаксис мĕн çинчен вĕрентет.




**Синтаксис** - чӗлхе наукин пуплев епле йӗркеленни ҫинчен вӗрентекен пайӗ.

Чĕлхе тытăмне илес пулсан, синтаксиса чĕлхе хатĕрĕсен тата вĕсемпе усă курмалли правилăсен системи темелле.

Ăс-хакăл опытĕнче мĕнле вырăн йышăнни тăрăх синтаксиса пуплев тытăмне тĕпчесе тухнă ăс-тăн пуянлăхĕ теме пулать.

Чĕлхе наукин ыти пайĕсенчен тăрать:

- фонетикăран,
- лексикăран,
- морфологирен синтаксис çыннăн шухăшлавĕпе тÿрремĕн çыхăннипе уйрăлса тăрать.

Çын шухăшлавĕпе хутшăнăвне тĕпе хунă май синтаксис пуплеве пайăн-пайăн пайласа тĕпчет, пуплев сыпăкĕсем пĕр-пĕринпе епле шайлашăнса тăнипе тишкерет, пуплев элеменчĕсем пĕр-пĕринпе епле çыхăннине уçса парать.

Тĕслĕхрен:

*Тарье / паçăрах тăнă. Вăл / Ольăпа Вовăна шкула ăсатма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ.*

*Лавкка / чўречисем // уçă.*

*Кĕркунне. Виçĕм кун / кăшт-кăшт пĕрремĕш юр курăнкаларĕ.*

Синтаксис, тĕпрен илсен, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисене тишкерет.

Предложени тытăмĕнче вăл шухăш пайĕсемпе тӳр килекен сыпăксене, сăмах майлашăвĕсене тата уйрăм сăмахсене асăрхать. Тишкерӳ пуплеве сăмах таран пайланипе пĕтет, сăмахĕ мĕнле те пулин формăра пулать.

Ăна синтаксисăн чи пĕчĕк единици **синтаксема** теççĕ. Синтаксемăна лексика тата категори пĕлтерĕшĕсем çине таянса морфологи формисене шута илсе кăтартаççĕ. Синтаксемăн функцийĕ çинчен калаçма йышăннă. Синтаксемăн функцийĕ – ку е вăл формăн предложенипе сăмах майлашăвне кĕреслĕх вăйĕ е хăй тĕллĕн предложени пулма пултарнин вăйĕ. Тивĕçлĕ условисенче синтаксема е предложенисене кĕма пултарать, хăй тĕллĕн предложении те тăвать.

**Синтаксис**

**морфологипе,**

**лексикăпа,**

**фонетикăпа**

**çыхăнни**

**Синтаксис 3 функций пуррине кăтартать**.

1. Пĕчченех предложени туни.
*Кĕркунне. Ялта. Сентябрь*.

2. Предложенин компоненчĕ пулни.
*Паян уяв. Студентсем вĕренеççĕ.*

3. Сăмах майлашăвĕн пайĕ пулни.
*Лавкка чÿречи. Сĕтел ури.*

Синтаксис аспекчĕсем.

Учăнăйсем синтаксиса пуплеве тĕрлĕ енчен тĕпченине палăртаççĕ, пĕрисем 3 енчен тĕпчет теççĕ, теприсем каланă тăрăх, 4 енчен.

Çак енсем:

- Пуплевĕн тытăмĕ.
- Пĕлтерĕш енĕ.
- Хутшăну енĕ.
- Хутшăнупа прогматика хушшинчи çыхăну.

**Синтаксис**
**семантикине**
**тишкернӗ**
**историйӗнчен**

Предложени содержанийĕ мĕнле йĕркеленнине вырăс тĕпчевçисем XIX ĕмĕрте1980-1990 çулсенче сăнанă.
Тĕслĕхрен:
А. Дмитриевский предложение *шухăш драми* тенĕ. Çав драмăра тĕп вырăнта сказуемăй тăнине асăрханă.
В. Сланский профессор профессор предложенин содержани членĕсене тупса палăртмалла тенĕ. Предложенин содержанине тĕрлĕ трансформацисем туса тĕпчеме сĕннĕ.
XX ĕмĕрĕн çурриччен предложени содержанийĕ сăмахсемпе пуплев пайĕсем улшăннипе çыхăнать тесе палăртнă.
Тĕслĕхрен: *Вăл чирлет – вăл чирленĕ. Вăл тунсăхлать – вăл тунсăхлă – ăна тунсăх.*

1960-мĕш çулсенче синтаксис семантикине ятарласа тĕпчеме пуçлаççĕ. Предложенин содержанине конкретлă пуплев ситуацинче мар, абстракци шайĕнче тĕпчесси тĕп вырăнта тухса тăрать.

Пĕлтерĕшлĕ синтаксис тата лексика семантики.
1960-мĕш çулсенче пĕлтерĕшне тĕпчесси мала тухса тăрать, çавăнпа малтанхи вăхăтра лексика пĕлтерĕшĕпе грамматика пĕлтерĕшне пĕр-пĕринчен уйăрсах кайман. Лексикологи сăмах пĕлтерĕшне палăртнă май предложение илет, ăна тĕрлĕ майлăн улăштарса пăхать.

Синтаксис предложенин пĕлтерĕшне тишкере пулсан, сăмахăн лексика пĕлтерĕшне те шута илет.
Предложенин пĕлтерĕшне тĕпченĕ чух тĕп вырăнта предикаци тăвакан сăмах (сказуемăй) тăрать.
Предложени ĕçпе, пулăмпа килĕшсе тăракан анлă знак.

***Валя университетра вĕренет.***

Сăмах ăнлавпа килĕшсе тăракан ансăр знак. ***Университет.*** ĕнле палăрнине шута илет.
Çавнашкал мелпе чи малтан Н. Арутюнова профессор усă курнă. Вăл, тĕслĕхрен, çакнашкал предложенисем пуррине палăртать:
а) пахалăх характеристика паракан предложенисем: ***Çанталăк уяр;***
б) пуррине пĕлтерекен предложенисем: ***Ку вăрманта упа пур*****.**

**Предложенин**

**пĕлтерĕш**

**тытăмне**

**тĕрлĕ**

**енчен**

**тĕпчени**

Предложенин пĕлтерĕшĕ икĕ пайран тăрать:

- объективлă чăнлăхпа кăтартакан пай

- субъективлăхпа çыхăннă.

***Предложенин объективлă содержанине уçса памалли* виççĕ *мелсем***

1. Пропозици ăнлав çине таянни. Пропозици термина логикăран илнĕ. Ку терминпа пĕр предложенин темиçе вариантне пĕрлштерсе тăракан пĕлтерĕше палăртаççĕ.

2. Пропозици тытăмĕ предикатран килет. Предиката кура ытти сăмахсен синтаксисри пĕлтерĕшне курма пулать.

3. Семантика тытăмĕ ăнлав çине таянни.

*Сиркостант* – событи мĕнле ситуацире пулса иртнине пĕлтерекен сăмахсем.

Предикатсем пĕр вырăнлă тата темиçе вырăнлă пулма пултараççĕ.

Предложенин семантика тытăмĕ лексика единицисен синтаксис картинчи проекци пулса тăрать.

Тĕпчевре чи малтан предложени схемине кăларса тăратмалла. Ученăйсем ку е вăл схема мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртаççĕ. Пĕр-пĕр пĕлтерĕше мĕнле схемăпа палăртма май пуррипе çуккине сăнаççĕ.